К82.39(=Чув)
К98
Ч-44659

# Кушакпа Çерçи



Национальная библиотека ЧР
4-044659

К82.39(=Чув)
К96



# Кушакпа Çерçи

Кĕске юмахсем

Художникĕ *Е.В. Иванова*



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2012



Национальная библиотека
Чувашской Республики
И-44659
Проверено 21 МАР 2017

# Тилĕпе Тăрна.

Пĕр Тиллĕн вĕçме вĕренес килнĕ тет. Тăрна патне çитет те калать:

— Тăрна тусăм, мана та вĕçме вĕрентха, — тет.

— Юрать, — килĕшет лешĕ. Тилле çурăмĕ çине лартать те çӳлех вĕссе хăпарать, вара ăна çĕре пăрахать. Тилли утă капанĕ çине ӳкет. Тăрни вĕçсе анать те: — Вĕрентĕн-и ĕнтĕ? — тесе ыйтать.

Тилли калать:

— Вĕрентĕм те-ха, начартарах пĕлетĕп, — тет.

— Лар эппин ман çине, — тет Тăрни, — çӳлерех хăпарар.

Тилли хăпарса ларчĕ тет те, кусем çӳле-çӳле çĕкленчĕç тет.

— Çитет-и? — ыйтать Тăрни.

— Çĕр пичĕ сурăх тирĕ пек анчах курăнать, çитĕ, — тет Тилли.

Тăрни сулкаланать те Тилле ӳкерет.

Хайхискер шурлăха шăмпăлт! персе анать те курăнми пулать.



# Кушакпа Çерçи.

Кушак хӗвел питтинче ӑшӑнса выртнӑ. Тутлӑ ыйхӑпа киленсе куçӗсене хупса мӑрлатнӑ. Сасартӑк вӑл юнашарах такам чӗвик! чӗвик! сасӑ панине илтнӗ. Куçне уçнӑ та курах кайнӑ: валашка хӗрринче Çерçи ларать иккен, тем сӑхать. Кушак пӗчӗк чӗр чунран хӑранипе шӑртне вирелле тӑратнӑ. Çерçи валашка тӑрӑх сиккелесе çывӑхах пынӑ. Кушак Çерçие палласа илнӗ, чалт çеç сикнӗ те ӑна ярса тытнӑ. Анчах Çерçийӗ ватӑскер пулнӑ. Ватӑ çерçие часах улталаймӑн!



— Чим! Чим! — тенĕ вăл. — Эс мана çиме çиййĕн те, анчах аса ил-ха: паян çывăрса тăрсан пит çурăн-и? Эсĕ кушусене те тасатман-çке. Ăслă çынсем ирхине çывăрса тăрсан пит çăваççĕ, вара тин апата лараççĕ.

— Чăнах та, пит çăваймарăм! — аса илнĕ хайхи Кушак.

Вăл чĕрнисене вĕçертсе Çерçие ирĕке янă, хăй çăвăнма пикеннĕ. Çерçи пăхнă-пăхнă та пăр-р! тунă тет.

Çав вăхăтранпа кушак апат умĕн мар, апат хыççăн питне çăвать тет.



# Пăрупа Чĕрĕп.

Пĕр Пăру Чĕрĕпе курнă та:

— Эпĕ сана çисе яратăп, — тенĕ.

Пăру вĕсене çименнине Чĕрĕп пĕлмен те хăраса ӳкнĕ. Вăл çавăнтах çăмха пек пуçтарăнса выртнă та:

— Тутанса пăх-ха, — тенĕ.

Айван Пăру малти урисене чармакланă та Чĕрĕпе чĕлхипе çуласа илнĕ.

— У-у-у-уй! — тесе мĕкĕрсе янă вăл. Амăшĕ патне чупса кайнă та: — Чĕрĕп мана чĕлхерен çыртрĕ, — тенĕ.

Ĕне пуçне тăратса пăрушĕ çине тимлĕн пăхса илнĕ те татах тутлă курăк çиме тапратнă.

Чĕрĕп пилеш айĕнчи йăвине кĕнĕ те хăйĕн амăшне çапла каланă:

— Эпĕ питĕ пысăк тискер кайăка çĕнтертĕм, арăслан пулчĕ пулмалла, — тенĕ.

Чĕрĕп маттурри çинчен хыпар кăвак тинĕс леш еннех çитнĕ.



## Пакшапа Чакак.

Вăрманта Пакшапа Чакак пĕр-пĕринпе кӳршĕллĕ пурăннă. Пакши çу каçа ырми-канми ĕçленĕ, хĕлле валли апат-çимĕç хатĕрленĕ. Чакакĕ вăрман тăрăх уссăр чакăлтатса çӳренĕ. Хутран-ситрен Пакша патне пырса ларса ăна çапла каланă:

— Ытла та выçă, ĕмĕтсĕр эсĕ, Пакша. Пурпĕрех вăрманти мĕнпур кăмпапа мăйăра пуçтарса пĕтереймĕн! Килес çул каллех пулаççĕ вĕсем. Эпĕ вара сан пек çăткăн мар. Хырăм выççан мĕн те пулсан тупса çиетĕпех!



Вăхăт иртнĕ. Кĕркунне хыççăн шартлама сивĕ хĕл те çитнĕ. Тарăн юр выртнипе çимелли тупаймасăр чылай кайăккĕшĕк выçăпа аптранă. Выçлăн-тутлăн пурăннипе Чакак та пĕтĕмпех начарланса кайнă. Халĕ ĕнтĕ вăл тутă Пакша çине пăхса çăварне шыв сыпнă пек ним шарламасăр ларнă. Пакши веçех улшăнса кайнă Чакака çапла вĕрентнĕ:

— Тирпейлĕхпе перекетлĕхе çăткăнлăхран уйăрма пĕлес пулать, Чакак тус. Çулла хатĕрлесе хуман пулсан халĕ эпĕ те сан пекех выçă ларнă пулăттăм.



# Вĕçкĕн Çерçи.

Çурхи ăшă çанталăка сиссе чĕвĕл çерçисем çапă çине пухăннă тет. Пурте чĕвĕлтетсе пуплесе пĕр-пĕрне çĕнтересшĕн тет. Вĕсенчен пĕри:

— Эй, çав Хурчăка мĕн вара вăл? Ку тĕнчене унран хăрама çуралман-ха эп. Ик çунатăм — çапмалăх, ик ураçăм — тапмалăх, ылтăн сăмса — сăхмалăх! — тесе чалт-чалт сикнĕ тет пурнăç тутине пĕлменскер.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ — Хурчăка вĕçсе килчĕ тет те çапă çине чул пек персе анчĕ тет. Хăраса ӳкнĕ çерçисем чăлпар саланса тарса пĕтрĕç тет.

Хурчăка вĕçсе кайсан чĕвĕлти кайăксем лаштах сывласа ячĕç тет, хăйсен унчченхи вырăнне вĕçсе тухса ларчĕç тет. Шутласа пăхаççĕ тет те — хайхи вĕçкĕн Çерçи çук тет.



# Арланпа Çĕр куянĕ.

Пĕр шăтăкра Арланпа Çĕр куянĕ пурăннă. Туссем иккĕшĕ те питĕ ĕçчен пулнă, çу вĕçнелле вĕсен шăтăкĕ тырăпа тулнă.

Хăйсем валли тырă пуçтарса çитерсен Арлан хăнана кайнă. Çĕр куянĕ кил сыхлама юлнă. Çанталăк типĕ тăнă. Арлан икĕ эрнерен тин каялла таврăннă. Йăвине кĕрсе хĕлле валли хатĕрлесе хунă тыррине курсан вăл тĕлĕнсех кайнă: хĕл апачĕн çурри çеç тăрса юлнă. Арлан килте юлнă тусне:



— Кам ухмахĕ хирте тырă пур чухне хĕлле валли хатĕрлесе хунине çиет! — тесе вăрçса тăкнă.

Çĕр куянĕ кӳреннĕ те Арлан патĕнчен пуçĕпех тухса кайнă.

Часах хура кĕркунне çитнĕ. Йĕпе-сапа çанталăк тăнипе Арланăн типĕ тырри кӳпчесе кайнă та, шăтăк каллех тулса ларнă.

Тырă хăй виçине ларнине курсан Арлан Çĕр куянне ахалех кӳрентернине тавçăрса илнĕ, анчах каланă сăмаха каялла тавăраймăн.



# Качакапа Упа.

Пĕр вăрманта Качакапа Путекки тата Упа пурăннă. Пĕррехинче Качака кукăр-макăр çулпала курăк шыраса пынă. Упа ăна хăратма йăпшăнса çитнĕ. Качака умне юриех лĕпĕс-лĕпĕс чупса тухнă. Качака хăранипе хăвăрт каялла тапса сикнĕ. Хуллен-хуллен Упа та килне таврăннă.

Качака килĕнче хашкаса тăнă. Упа Качакаран тăрăхласа çапла юрланă:

Каччин-каччин качака
Апат шыраса тупаймасть.
Кунĕпе апат шыраса
Хăй путекне пăхаймасть.

Качака çилленсе кайнă та Упана хырăмĕнчен пĕррех тĕксе шăтарнă. Упа вилнĕ те кайнă.

Качакапа Путекки халь те питĕ лайăх пурăнаççĕ тет. Вĕсене хăратакан тек никам та çук тет.

УДК 821.512.119-93
ББК 82.3 (2 Рос=Чув)-6
К 96



*Литературно-художественное издание*

Для детей дошкольного возраста

# Кушакпа Çерçи
# Кот и Воробей

**Короткие сказки**

*На чувашском языке*

Составитель *Г.А. Матвеева*

Художник *Е.В. Иванова*
Редактор *О.Л. Федорова*
Художественный редактор *С.А. Бритвина*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой*

Общероссийский классификатор продукции
ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 27.01.12.
Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 1,17.
Уч.-изд. л. 1,09. Тираж 1500 экз. Заказ № 113. Изд. № 3.

ГУП Чувашской Республики
«Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1».
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

ISBN 978-5-7670-1947-2

© Матвеева Г.А., составление, 2012
© Чувашское книжное издательство, 2012

43.0

И-44659

Национальная библиотека
Чувашской Республики

